Сăмах – ветерана

# Вăрçă тата çамрăклăх

Иккĕмĕш тĕнче вăрçи пĕтни чылай пулнăран хăшĕсем «вăрçă пирки çаплах çырма та кирлĕ мар, вăрçă тек пулмасть», теме пăхаççĕ. Чăнах та, Тăван çĕршыв мĕн чухлĕ пуянрах тата вăйлăрах, пирĕншĕн вăрçă хăрушсăрлăхĕ çавăн чухлĕ пĕчĕкрех пулĕ. Анчах вăрçă хăрушлăхĕ пачах çук тени тĕрĕс мар. Акă нумаях пулмасть темиçе пин километр аякри, океан леш енчи Америкăри пĕрлешÿллĕ штатасен салтакĕсем хăйсен хĕç-пăшалĕсемпе халь Украинăна пăхăнакан Крым çыранне пырса вырнаçма тытăнни те ăна лайăх кăтартса парать. Атом хĕç-пăшалĕ тĕнчере сарăласран чарма тесе çав американецсем хăйсене майлисемпе Ирака пырса вырнаçрĕç. Чăннипе унта атом хĕç-пăшалĕ çуккине курчĕç пулин те каялла тухма шутламаççĕ. Унта паян кун та сахал мар çын вилет.

Аслă Отечественнăй вăрçăра тунă Çĕнтерÿ пирĕн халăх калама çук пысăк вăй тата миллионшар çухату тупипе пулчĕ. Çапла, вăрçă миллионшар çын пурнăçне татрĕ.

Çав çулсем халăха мĕнле нуша тÿстернине аса илтерме ун чухнехи икĕ çамрăк çын, пулас мăшăр пурнăçне илсе кăтартни хальхи çамрăксемшĕн усăллă пулĕ тетĕп.

Татьяна Кив Матьăк ялĕнче 1923 çулта сакăр ачаллă пысăк çемьере çуралнă. Нумай ача-пăча ашшĕ-амăшĕшĕн пысăк телей пулнă, пурнăç малашне савăнăçлă пулас пек туйăннă.

Анчах вăрçă хăрушлăхĕ çывхарса килнĕ. 17 çулхи Татьянана Çĕмĕрлепе Етĕрне хушшинчи шоссе çулне тума янă. Пысăк кĕреçесемпе çамрăк хĕрĕн тăпра-хăйăр йăта-йăта ывăтма тивнĕ. Вăрçă пуçланнă. Пилĕк пиччĕшĕ те фронта тухса кайнă. Татьяна та килте пулăйманнă пĕрех, килтен аякри вырăнсенче ĕçлемелле. Ку хутĕнче унăн шартлама сивĕре Сăр юхан шывĕ тăрăх укреплени тунă çĕрте шăн тăпра чавма тивнĕ. Ал тупанĕсенче юнлă сурансем пуличчен ĕçленĕ.

1942 çулта хĕре Çĕмĕрле вăрманне патшалăх валли йывăç касма янă. Кунне çын пуçне икĕ кубла метр вутă касса хатĕрлемелле. Хĕрсем мăн йывăçсене йăвантарнă, туратсене иртнĕ, вĕсене çунтарнă, вуллисене касса вакланă. Хатĕр вутăна штабель туса купаланă. Хĕрсем тăрăшса ĕçленĕ, нормăна ялан ытлашшипех тултарнă. Çавăнпа вĕсене “стахановкасем” тенĕ. Хушăран супăнь е çавна май япаласем парса чысланă.

1942 çулта Татьянăна Шупашкара, вăрçă хатĕрĕсем тăвакан завода (ун чух ăна 320-мĕш завод тенĕ) янă. Куллен вуникшер сехет ĕçленĕ. Пресс цехĕнче вăрçă хатĕрĕсем валли детальсем тунă. Цехра ĕçлеме йывăррисĕр пуçне хăрушлăх та пулнă. Час-часах пушарсем ăнсăртран тухнă. Пушара сÿнтерсен, тĕтĕм-сĕрĕм сÿрĕлсе пĕтиччен станоксем умне тăнă.

Вăрçă пĕтсен те хĕрсене часах ĕçрен хăтарман. Татьяна 1946 çулта вăрçăран таврăннă Чуманкасси çамрăкне Пантелей Федорова качча тухнă. Качча тухсан тин Татьянăн заводран çăлăнса тухма май килнĕ. Çапла çамрăк хĕр вăрçăн пур çулĕсенче те йывăр ĕçсенче арçын вырăнĕнче вăй хурса фронтри салтаксене çĕнтерÿ тума пулăшнă.

Пантелей Федоров, 1918 çулта çуралнăскер, вăрçă пуçланиччченех виçĕ çул хушши çарта срочнăй службăра пулнă. Вăрçăра çапăçма Çурçĕр Кавказра тытăннă. Федоров сержант ялан разведкăра пулнă. Курскпа Орел пĕккинчи ик енчен те калама çук нумай танксем хутшăннă çапăçуран чĕрĕ тухнă. Фронтовиксем унтан чĕрĕ тухма пултарнисене “иккĕмĕш хут çуралнисем” тетчĕç. Тĕрĕссипе каласан, фронтовиксен, çав шутра Пантелей Федоровăн та, “иккĕмĕш хут çуралма” сахал мар тивнĕ.

Харьков, Полтава, Кременчуг, Кировоград тата ытти нумай хуласене ирĕке кăларнă. Аманнă-сывалнă, каллех аманнă... Сарлака Днепр урлă каçса плацдарм тытса илнĕ, ăна тĕп вăйсем çитиччен алра тытса тăнă.

Польшăна ирĕке кăларнă, нимĕçсен Дрезден хулине тытса илнĕ. Вăрçа Чехословаки тĕп хулине Прагăна илнипе вĕçленĕ. Пантелей Федоров сержант Хĕрлĕ Ялав, 3-мĕш тата 2-мĕш степеньлĕ Мухтав орденĕсене, “За боевые заслуги” тата ытти нумай медальсене тивĕçнĕ. Верховнăй Главнокомандующи те ăна çирĕм хут ытла тав тунă.

Çапла 1945 çулта вăрçă пĕтнĕ, пирĕн “геройсем” чĕрĕ юлнă. Тепĕр çулне нумай хура-шур курнă каччăпа хĕр пĕрлешнĕ, çемье йĕркеленĕ. Малашне телей курса пурăнмалли çеç юлнă темелле. Анчах Турри вĕсене телей курма нумай вăхăт паман. Тĕрĕсрех каласан, Турри кунта пĕртте айăплă пулман, каллех вăрçă нушиех пĕтмен иккен. Темиçе хут аманнă Пантелей Федорович 1950 çулта вилсе кайнă. Унăн арăмĕн Татьянăн хăйсен ывăлне пĕчĕк ура çине тăратмалла пулнă. Мăнукĕсене çитĕнтерсе Татьяна кинемей те иртнĕ çул çĕре кĕчĕ. Çапла пулнă вăрçă вучĕ витĕр тухнă Чуманкассинчи Федоров Пантелейпе унăн мăшăрĕн Татьянăн пурнăçĕ.

Малашне çавăн пек нушасем ан пулччăр тесен пирĕн хамăр çĕршыва пуянрах та вăйлăрах пултăр тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Çĕршыв пуянлăхĕнче пирĕн çăлăнăç та, телей те.

**И. ВЯЗОВ,**
**Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ.**

Асăрханулла пулăр

# Шăрăх кунсем инкексĕр пулччăр

Нумай кĕтнĕ хĕвеллĕ ăшă кунсем пуçланчĕç. Анчах та шăрăх çанталăк, енчен те эпир хамăра тытма пĕлмесен, сахал мар инкек патне çитерме пултарать.

Çак тапхăрти çулсерен пулса иртекен тĕслĕхсене тишкернĕ май, ашшĕ-амăшне, шкул ачисене, яшсемпе хĕрсене шăрăх çанталăкра асăрханулла пулмаллине тата тепĕр хут аса илтерес килет.

Пурте пĕлетпĕр, халăх каларăшле: “Вăрăран юлать, çулăм шăрпăк таранах пуçтарать”,- тенине. Мĕн вăл пушар 30 градуслă е тата ытларах шăрăхра? Шутлама та хăрушă.

Республикăра çулталăк пуçланнăранпа 700 ытла пушар тухнă. Пурлăх çулăмра кĕлленесси 9 хут ÿсрĕ, 67 çыннăн пурнăçĕ татăлнă. Районĕпе вара çулталăк пуçланнăранпа вут-çулăм 27 хутчен алхасрĕ. Вăл 11 çыннăн пурнăçне татрĕ.

Ăшă тата типĕ çанталăкра хурт-кăпшанкă, тĕрлĕрен микробсемпе бактерисем хăвăрт аталанаççĕ. Кашни минутра кирек камăн те хăвăрт сарăлакан вар-хырăм чирĕсем пуçланса кайма пултараççĕ. Çавна май апат-çимĕçпе усă курнă чух санитарипе-гигиена йĕркисене çирĕп пăхăнса пурăнни питех те кирлĕ çак кунсенче.

Хурт-кăпшанкăпа кĕрешес ĕçре тĕрлĕрен хими имçамĕсемпе усă курнă чух та хăрушлăх йĕркисене çирĕп пăхăнни хушма инкекрен пăрăнса юлма пулăшĕ.

Тата тепĕр тĕслĕх – шыва кĕнĕ чух асăрханулла пуласси.

Шăрăх çанталăкра шыва кĕрсе ÿт-тире усăлтарасси – кашнишĕн кăмăллă туйăм, уйрăммăнах ачасем килĕштереççĕ çак ырлăха.

Шыв вăл – ырлăх, шыв вăл - пурнăç. Анчах ялан-ши эпир унпа тĕрĕс усă куратпăр?

Статистика кăтартăвĕсем тăрăх, пĕтĕмĕшле илсен, юлашки 3 çул хушшинче шывра асăрханусăр пулнипе районти юхан шывсемпе пĕвесенче 21 çыннăн пурнăçĕ татăлнă. Кăçал та ăшă кунсем пуçланчĕç çеç пулин те, районта 2 çын путса вилнĕ ĕнтĕ.

Çуллахи вăхăтра чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхатарас тĕллевпе районта кирлĕ мерăсем йышăннă, çакăншăн яваплă çынсене те палăртса хăварнă.

Хисеплĕ граждансем, аслисемпе ачасем, яваплă çынсем! Хамăр шăпа – хамăр алăра. Уйрăмах ачасене асăрханулăхăн пулма ыйтатпăр. Пĕчĕк ачана аслисемсĕр шыв хĕрне ярас марччĕ. Шыва кĕнĕ чух ачасемпе пĕрле аслисем пулни вырăнлă. Аслисен хăйсен те çыран хĕрринче пуçа çухатас марччĕ.

**Н. МИЛЮТИН,**
**район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пай ертÿçи.**

Конкурс

# Тухтăр ял хуçалăх конкурсĕнче çĕнтерчĕ

Ял хуçалăх аталанăвĕ, унăн пуласлăхĕ кăсăклантарать паян ял çыннине. Çавăнпа та телевиденипе Раççей каналĕпе пыракан “Сельский час” передача та ял хуçалăхĕпе çыхăннă çивĕч ыйтусене хускатать. Асăннă передача ку темăпа ятарлă конкурс та ирттерчĕ. Унă 2 турĕ апрель-май уйăхĕсенче иртрĕ. Асăннă передачăна пăхакансем кашни кăларăмрах паракан 2-шер ыйтăва та асăрхамасăр иртмерĕç мар ĕнтĕ.

Районти тĕп больницăри Е.Н. Семенова терапевт та пĕрремĕш ыйту хыççăн интересленсех хуравлама пуçларĕ. Кунта ăна килте сад-пахча тытни, çĕр çинче ĕçлени те пулăшрĕ. Ыйвăртарах ыйтусем çине вара мăшăрĕ Алексей Семенович хуравлама пулăшрĕ. Агроном профессийĕнче сахал мар вăрттăнлăх пытаннă-и? Конкурс вăхăтĕнче Елена Николаевна Интернет пулăшăвĕпе те усă курчĕ. Ыйтăвĕсем йывăр пулин те çав тери кăсăклă пулни çунатлантарчĕ. Ара, çак конкурса хутшăнман пулсан, Воронежри хура тăпран пахалăхлă эталонĕ Францинче упранни пирки ăçтан пĕлетчĕ-ха.

Ял хуçалăх отраслĕнче хăйĕн тавракурăмне аталантарас тĕллевпе конкурса хутшăнни Елена Николаевнăшăн çĕнтерÿпе вĕçленчĕ. Виçĕм кун райбольница тухтăрĕ Мускава “Сельский час” программăна хутшăнма кайрĕ. Вырсарни кун, июнĕн 25-мĕшĕнче, 7 сехет те 35 минутра Раççей каналĕпе кăтартакан “Сельский час” передачăна пăхсан, эсир хăвăрах Муркаш çыннисем ниçта та, нихăш сферăра та маххă паманнине курса ĕненĕр.

Пĕтĕм Раççейри конкурс çĕнтерÿçи Е.Н. Семенова 15 пин тенкĕлĕх тĕслĕ телевизора тивĕçнĕ. Эппин, ыран çак передачăна курмасăр ан юлăр.

**Л. ПАВЛОВА.**

Вулакан пултарулăхĕ

## Чăваш чĕлхи

Тăван чĕлхе - чăваш чĕлхи,
Эс маншăн шăнкăр шыв юххи.
Епле эс çепĕççĕн янран,
Ир-каçăн ман чуна лăпкан.

Чăваш чĕлхи - анне чĕлхи,
Пур чĕлхерен те чи паха.
Ман калаçас килет санпа,
Ман мухтанас килет санпа.

«Çÿпçи» пуян чăваш чĕлхин:
Йăх-несĕлсен пиншер çулхи
Тымарĕнчен вăй-хал илет,
Çĕн кĕвĕпе чуна çĕклет!..

Ан çĕт нихçан, чăваш чĕлхи,
Санпа пулас малашлăхри
Çĕн ăрусем те пирĕн пек
Савса калаçчăр чĕререн!

**И. МАЙКОВ.**
Кашмаш ялĕ.

## Выражаю благодарность

Благодарим работников РОО, коллектив учителей и работников Большесундырской средней школы, родителей учащихся, соседей, всех близких и родных за сочувствие и организацию похорон любимой дочери, внучки, племянницы и сестры Яны.

**Нестеровы, Кирилловы.**

## Пĕлтерÿсем. Объявления

**КПКГ «Агрокредит»**
краткосрочные
**ЗАЙМЫ**
до 20 000 руб., 5 % в месяц
Ул. 50 лет Октября, д. 23, офис 201
(в здании сельхозтехники)
Тел. 2-18-13
1-5.

**Доставка кирпича (силикат, керамблок) до дома. Цена доставки договорная. Тел.: 8-906-134-16-47, 60-706.** 2-3.

**Продается трактор МТЗ-80 1987 г. в. и комбайн СК-5М «Нива» 1989 г. в.**
**Тел.: 2-10-79, 33-2-48.** 3-3.

**Августра пăрулалли ĕне сутатпăр. 5 пăрулнă, хĕрлĕ тĕслĕ.**
**Телефонĕ: 60-3-41 (каçхине 20-00 сех.).** 2-2.

**ЗАКУПАЕМ ПО ДОРОГИМ ЦЕНАМ:**



**- упитанных быков, телок, свиней, коров в живом виде;**
**- свинину.**



**Телефон для справок: 60-662, 8-9603051597 звонить в любое время суток. Герман.** 1-3.

**Куплю однокомнатную квартиру в с. Моргауши. Можно и старой планировки.**
**Телефон: 8-960-313-27-95.** 1-2.

**В магазине «Василек», на территории Моргаушского рынка, широкий выбор сотовых телефонов, аксессуаров, бытовой техники. Кредит 0 % без первоначального взноса. Закачка мелодий, картинок, видеороликов, игр, прошивка сотовых телефонов. Низкие цены. Мы рады видеть Вас в нашем магазине.** 1-3.

**Васкавлă куçарса каймалли (пятистенка) çурт сутатпăр. Паровой отопленипеле. Пиккикасси ялĕ.**
**Телефонĕ: 8-927-845-70-53.**

**Чуманкассинче ялта пурăнмалли çирĕп кил-хуçалăх сутатпăр. Пÿртпе хуралтăсем икĕ хутлă, пурте кирпĕчрен. Кил хушшинчех тарăн çăл. Шыв пÿрте те кĕрет. Çĕр участокĕ кил çывăхĕнчех пĕр гектар. Пурăнмалли пÿрт калăпăшĕ 90 тăваткал метр. Унта котельнăйпа пĕрле 9 пÿлĕм. Килĕшекенсем пур пулсан, Шупашкарти е Муркашри кирек мĕнле хваттерпе те улăштаратăп.**
**Адресĕ: Чуманкасси ялĕ, Советская урамĕ, 5-мĕш çурт. Иванов Борис Иванович.**

**В Моргаушском рынке внутри здания продается торговое место площадью 8,2 кв. м. Справки по телефону: 8-927-863-28-70.**

**ГУП ЧР «Птицефабрика «Моргаушская» требуются операторы по обслуживанию птицеводческого оборудования. Оплата труда сдельно-премиальная. Возраст до 45 лет. Телефон: 2-25-37.** 1-2.

**Продаю блоки керамзитобетонные 20х20х40 (также и цветные), песок речной, гравмассу, цемент, шифер, рубероид. Доставка по Моргаушскому району бесплатно.**
**Требуется водитель на ГАЗ-53 самосвал. Обращаться по телефонам: 2-18-80, 8-903-379-16-62, 8-960-308-28-01. Андрей.** 1-2.

**ГОСУДАРСТВЕННОЕ ОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ “ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ КУЛЬТУРЫ И ИСКУССТВ”**
**Лицензия А № 64509 от 29 марта 2005 г. выдана Федеральной службой по надзору в сфере образования и науки**
**ОБЪЯВЛЯЕТ ПРИЕМ СТУДЕНТОВ НА 2006-2007 УЧЕБНЫЙ ГОД**
**Очная форма обучения**
**По специальности 070201 “Актерское искусство” (квалификация – артист драматического театра и кино) для Чувашского академического драматического театра им. К.В. Иванова и для Государственного русского драматического театра.**
**Художественный руководитель курса – народный артист СССР, профессор Валерий Николаевич Яковлев.**
**Принимаются девушки не старше 23 лет и юноши не старше 25 лет на базе среднего (полного) общего образования, свободно владеющие чувашским языком (для Чувашского академического театра) и свободно владеющие русским языком (для Государственного русского драматического театра).**
**Приемные экзамены:**
**Специальность (проводится в 3 тура) выявляет творческие данные поступающего: абитуриент читает подготовленные отрывки из художественной прозы, басню, стихотворение. По заданию экзаменаторов показывает этюд, песню и танец.**
**Среди мужского и женского состава поступающих проводится раздельный конкурс.**
**Другие экзамены:**
**русский язык (ЕГЭ)**
**история Отечества (ЕГЭ)**
**литература (устно)**
**Срок обучения – 5 лет.**
**Работают подготовительные курсы по субботам с 8 апреля по 27 мая 2006 года с 14.00 ч.**
**Студенты обеспечиваются благоустроенным общежитием.**
**Прием заявлений – с 15 июня по 15 июля 2006 года.**
**Вступительные экзамены – с 16 июля 2006 года.**
**Адрес института: 428023, г. Чебоксары, ул. Энтузиастов, д.26.**
**Проезд тролл. №№19, 20, автобусами №№8, 22 до остановки “Институт культуры”.**
**Телефон (факс) 33-09-69.**

**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
**Директор-гл. редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа.
Тираж 3530.
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 23.06.2006 г.
Заказ 1483
Дежурный по номеру СУВОРОВА О.Ф.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.